Сăмах – паллă композитор çинчен

# Юрий Жуков юррисем – чĕререх çав вĕсем

**«Эпĕ Сирĕн çырăва илтĕм. Çырăва хăвăртрах уçса вуличчен «Хĕрарăм куççульне» пур-ши тесе пăхатăп. Куртăм та мĕн тери хĕпĕртерĕм, пĕр куплетне юрласа ятăм. Юрланăçемĕн куççуль тухса пырать. Ывăл ача калать: «Анне, ухмаха ертĕн-им, юрăшăн кам йĕтĕр». Çитес кунсенче куккан арăмĕ 40 çул тултарать. Эпĕ ăна колхозри радиопа çак юрра юрласах саламлатăп-ха. Тавах Сире хам юратакан юрă сăмахĕсене ярса панăшăн. Эсир çырса ярасса та шанманччĕ. Эсир хăвăрăн илемлĕ юррусемпе çынсен ĕмĕрне тăсма пулăшатăр. Тавах Сире. Нихăçан та ан чирлĕр, Сирĕн çулăрсем яланах таса пулччăр».** Арапуçĕнчи Валентина Ивановна çак çырăвĕ эпир пурте пĕлекен, хисеплекен Юрий Жуков композитор патне килнĕ вуншар çыруран пĕри. Юрий Нестерович пурне те типтерлĕ упрать, кашнин патне хурав яма та вăхăт тупать. Юрий Жуков юррисем тесенех эпир радио сассине пысăклататпăр. «Хĕрарăм куççулĕсĕр» пуçне чуна тыткăнлакан вуншар-вуншар юрă тăрăх пĕлетпĕр эпир Юрий Нестеровича. «Тавах сире, атте-анне», «Вăй выляççĕ шевлесем», «Ан хурлан», «Тăван кил ăшши», «Шăнкăр-шăнкăр çăлкуç», «Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет», «Чĕререн юрататăн пулсан», «Иртнĕ çамрăк ĕмĕр каялла килмест», «Тăванран хакли çук», «Пĕр сана савас килет» тата ытти юрăсем паян та вĕсене пĕрремĕш хут илтнĕ чухнехи пек чуна тыткăнлаççĕ. Хамăр республикăра кăна мар, аякри чăвашсем патĕнче те юратсах итлеççĕ Юрий Жуков юррисене. Чăвашсем кăна мар, вырăссем те.

**«Эпĕ Сирĕн çырăва илнĕ чух леспромхоз директорĕ отпускраччĕ. Вăл вырăс, 48 çулта. Унăн кăмăлне çырса пĕлтеретĕп Сире. Килсе курăр Çĕпĕре. Кĕтсе илме Красноярск аэропортĕнче транспорт пулать. Миçен килетĕр, килĕр, кĕтетпĕр. Хăçан килес тетĕр, килĕр, кĕтетпĕр»**, – теççĕ Красноярск крайĕнчен килнĕ çырура.

Пултаруллă юрăççем ăмăртмаллах хăйсен репертуарне кĕртрĕç Юрий Жуков юррисене: Виталий Гордеев, Людмила Семенова, Маргарита Туринге, Василий Раймов, Светлана Бубнова, Зоя Лисицина, Антонина Краснова, Рена Грачева, пĕртăван Малинасем, Николай Столяров... Халăх тӳрех асăрхарĕ, йышăнчĕ Юрий Жуков юррисене. Юрлама пуçларĕ.

Республикăра пурăнакансенчен К. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче кăçалхипе 4-мĕш çул кăтартакан В. Леканов çырнă «Юратсан юрлас килет» 2 пайлă комедие кайса курманнисем те нумаях мар пуль. Юрий Нестерович кĕвĕленĕ 9 юрă янăрать унта, спектакле асамлă сĕм парать. Иртнĕ çул вĕçĕнче кăларнă «Чăваш композиторĕсен юррисем – шкул ачисем валли» кĕнекере Ю. Жуковăн сакăр юррине кĕртнĕ.



Мĕнпе уйрăлса тăраççĕ-ха Юрий Жуков юррисем?

Чи малтанах, чуна тыткăна илекен илемлĕ кĕвĕпе. Çав кĕвĕсенчи чăвашлăх туйăмĕпе. Унăн юррисем пире хамăрăн пурнăç çине таранрах пăхма хистеççĕ, çут тĕнче илемне курма-туйма пулăшаççĕ, пурнăçа, пĕр-пĕрне хакламалли çинчен аса илтереççĕ. Паллах, кĕвĕ тени вăл юррăн çур пайĕ кăна, чуна кĕрсе вырнаçмалли юрă çырма çавăн пекех чĕрен кашни хĕлĕхне сĕртĕнекен сăвă кирлĕ. Сăвă суйласа илессине композитор пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тесе шутлать. Хăй те ачаранах сăвă çырса ӳснĕскер, сăвă пахалăхĕ мĕнрен килнине питĕ лайăх чухлать. Çавăнпа та этем кун-çулĕпе, пурнăç хура-шурĕпе çыхăннă таран шухăшлă сăвăсем суйласа илет.

Хăçан çавăрса илнĕ-ха илемлĕ кĕвĕ тĕнчи Етĕрне районĕнчи Янăм каччин чунне? Амăшĕпе ашшĕ Ульяна Ивановнапа Нестер Тихонович музыкăна юратакан çынсем пулнă. Çут тĕнчене талант текен асамлă япалапах килнĕ пуль çав Юрий Нестерович. Турă панине каярахпа Чăваш патшалăх педагогика институчĕн музыкăпа педагогика факультетĕнче аталантарать. Çакăнта кĕвĕлет те хăйĕн малтанхи юррисене Юрий Жуков. Вĕрентекенĕсем те чаплисемех пулнă çав: чăвашсен паллă композиторĕсем Федор Васильев, Виктор Ходяшев, Тимофей Фандеев...

Муркашсем Юрий Нестеровича 1973 çултанпа пĕлеççĕ. Икĕ çул маларах алла диплом илнĕскер, салтака кайса килме те ĕлкĕрет ку вăхăта. Ачасене музыкăна вĕрентнĕ хушăрах художество пултарулăх коллективĕсен ĕçне хастар хутшăнать, юрăсем çырать. «Радиопа ирхи передачăра 1991 çулхи чи лайăх юрăсене итлесе саншăн савăнтăм. Хамăр ентеш юррисем пирки сăмах пырать вĕт», – тесе çырать ун чухне Юрий Нестерович патне Етĕрне районĕнчи Коротков учитель-пенсионер.

Музыкант пултарулăхне Хисеп грамотисемпе, дипломсемпе палăртаççĕ. Вăл ертсе пыракан коллективсем тĕрлĕрен фестивальсемпе смотрсенче лайăх енчен палăраççĕ. 1994, 1998 çулсенче Мускаври иртнĕ Чăваш культурин кунĕсенче ытти искусство ĕçченĕсемпе пĕрле Юрий Жуков та хутшăнчĕ. Мускавра пурăнакан чăвашсене хăйĕн юррисемпе савăнтарчĕ. 1997 çулта Турци çĕршывĕнче пулчĕ: кунта тĕрĕк халăхĕсен фестивальне хутшăнчĕ.

Апрелĕн 17-мĕшĕнче Чăваш композиторĕсен Ассоциаци членĕ, Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, халăх юратакан композитор 60 çул тултарать. Паян та юрă хыççăн юрă çырать вăл. Çуралакан кашни çĕнĕ юрриех чуна тыткăнлать. Сăмахăма вара Юрий Нестеровича 9-10 классенче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентĕ Николай Ефимович учитель шухăшĕпе вĕçлес килет: «Санăн пуласлăхна эпĕ шанатăп», – тенĕ вăл хăйĕн çырăвĕнче. Хăй вĕрентнĕ ачан хальхи адресне пĕлменнипе «с. Моргауши, Юрию Жукову» тесе çырнă. Çак çырура та, композитор патне килекен ытти çырусенче те – халăх юратăвĕ. Çакăнтан хакли мĕн пултăр халăх валли юрăсем çыракан композиторшăн. Юбилей ячĕпе саламласа Юрий Нестеровича çирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Çĕнĕ юрăсем кĕтетпĕр Сирĕнтен, пултарулăх ĕçĕнче ăнăçу çулăра уçсах пытăр.

**Л. ПАВЛОВА.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

***ООО «Виктория»***
***Режим работы: с 8-ми до 17-ти в рабочие дни.***
***- Оценка имущества, в том числе земельных участков – содействие.***
***- Составление налоговых деклараций и передача по Интернету в ИФНС, ПФ.***
***- Оформление документов для получения имущественных, социальных налоговых вычетов.***
***- Восстановление и постановка бухгалтерского, кадрового учета.***
***- Помощь в регистрации, реорганизации, ликвидации организаций, ИП.***
***- Бизнес-консультации, полное сопровождение бизнеса.***
***Адрес: ЧР, с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119;***
***Тел.: (83541) 62-4-43; (8352) 22-10-60; моб.: 446-448. 6-9.***





Участник долевой собственности Леонтьев Аркадий Павлович, 08.12.1938 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 27, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Орининское, на территории землепользования СХПК «Восток», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:110301 площадью 1,46 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Орининского сельского поселения.
2. Леонтьеву Аркадию Павловичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 27.

Участник долевой собственности Леонтьев Валерий Аркадьевич, 03.01.1968 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 27, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Орининское, на территории землепользования СХПК «Восток», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:110301 площадью 1,46 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Орининского сельского поселения.
2. Леонтьеву Валерию Аркадьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 27.


**Инкубатор ООО «Фаворит» Моргаушского района в целях развития разведения сельскохозяйственной птицы в районе предлагает с 17 апреля:**
- **молодняк гусей (линдовская, рейнская);**
- **молодняк уток (медео (белая), цветная башкирская);**
- **суточных и подращенных бройлеров (хаббард, кобб-500);**
- **молодняк кур-несушек (от 3-х месяцев), цесарок.**

**При покупке птиц жителям Моргаушского района (при предъявлении паспорта) витамины, комбикорма, поилки БЕСПЛАТНО (условия в местах продаж).**

**Купившим птиц в апреле и мае, петушки в июне раздаются БЕСПЛАТНО.**

**Продукцию можно приобрести в Инкубаторе (бывшая столовая «Гигант» в д. Шатракасы Кадикасинского с/п) и на ферме (д. Сярмыськасы Юнгинского с/п) с 8-00 до 20-00 часов. Ежедневно.**




**Деревянные оконные и балконные блоки одинарной конструкции, сечение коробки и створки 78х78мм с двухкамерным стеклопакетом 36мм и двумя контурами уплотнительных прокладок немецкой фирмы. Покрытие пропиткой и лаком фирмы «SAIRLAK» Италия. Фурнитура фирмы «ROTO NT» МЫ ВЫПОЛНИМ ВАШ ЗАКАЗ БЫСТРО, КАЧЕСТВЕННО, ПО ДОСТУПНЫМ ЦЕНАМ. СКИДКИ НА ОБЪЕМ.**

**Деревянные окна – символ достатка, престижа, хорошего вкуса.**

**Раствор, бетон, керамблоки от производителя, цемент. Доставка. Тел.: 8(8352)507-805, 8-903-358-65-34, 8-903-345-66-34. Сертифицировано. 3-17.**

**Срочно продаю однокомнатную квартиру, 18,6 кв. м. в с. Большой Сундырь, ул. Новая, д. 3, кв. 10, 2/2 этажного деревянного дома, сарай, удобства на улице. Недорого. Тел.: 63-1-19.**

**Продаю инвалидную коляску. Тел.: 8-927-854-15-54.**

**СРО (строители, проектировщики, изыскатели). Допуск к работам за 1 день. Сезонный допуск без компенсационного фонда. Требуются подрядчики. Контактный телефон: 8-950-016-44-93. 2-4.**

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 13-38.**

**Продается однокомнатная квартира в д. Москакасы площадью 40 кв. м. Тел.: 63-0-35, 8-905-028-05-74. 3-3.**

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 7-8.**

**Ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-859-94-65.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

**ЗАО «МСО «Моргаушская» предлагает керамблоки пропаренные, кирпич красный, цемент, плитки фасадные, утеплители и другие строительные материалы по цене ниже рыночной. Обращаться по тел.: 69-7-23, 69-8-59. 3-3.**


Участница долевой собственности Леонтьева Вера Ивановна, 21.09.1941 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 27, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Орининское, на территории землепользования СХПК «Восток», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:110301 площадью 1,46 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Орининского сельского поселения.
2. Леонтьевой Вере Ивановне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д. 27.


**Ĕне сутатпăр, июньте пăруламалла. Тел.: 8-927-853-43-83.**

**Продаю песок речной 10 тонн – от 3500 руб., ОПГС (гравмасса) 10 тонн – от 6000 руб., цемент М-400 (40 кг) - от 125 руб., щебень, щебень кирпичный – от 700 руб./куб. м., блоки керамзитобетонные (пропаренные) 20х20х40 – от 27 руб./шт., 12х20х40 – от 20 руб.**
**Тел.: 8-919-666-55-77, 8-919-670-94-77, 8-987-670-84-77. 1-2.**

**Продается сетка-рабица. Широкий выбор в наличии и на заказ. Офис продаж в здании рынка с. Моргауши.**
**Тел.: 8-961-342-77-88. 1-5.**

**Продаем ячмень. Тел.: 8-927-992-05-19. 2-3.**

**Июнь уйăхĕнче иккĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-860-20-96, 8-905-027-66-67.**

**Продаю сено домашнее. Цена договорная.**
**Адрес: с. Ахманеи, ул. Зеленая, д. 3. Иванова Н.Е.**
**Тел.: 8-960-311-54-75.**

**Сдается торговое помещение под офис или магазин по ул. Гагарина, 2 (здание бани).**
**Тел.: 8-919-650-28-44.**

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
работаем с пайщиками
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
выгодные % ставки
КПКГ “КАПИТАЛ”
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.


Администрация Моргаушского района выражает соболезнование генеральному директору ОАО «Моргаушскавтотехсервис» Л.Д. Дмитриеву в связи с кончиной матери

**Дарьи Ильиничны**
**МАКАРОВОЙ.**


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru.

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 16.04.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.